Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

61 (7915) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи çурла (август) уйăхĕн 10-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ылтăн хурт ĕçчен çынна кăмăллать

Пыл уявĕ умĕн

**Районта ултă ял хуçалăх предприятийĕ утар тытать. Вĕсенче 300-е яхăн çемье шутланать. Ку енĕпе тăрăшакан фермерсем те пур районта. Уйрăм хушма хуçалăхра хурт-хăмăрпа ĕçлекенсен йышĕ пĕчĕк мар. 300 ытла çын ăна ĕрчетсе хушма тупăш илет, ку отрасльти тĕрлĕ продукципе усă курать.**



Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçри вăрттăнлăха йăхран йăха тăсакансем вара пысăк хисепе тивĕç. Ашшĕ-амăш, аслашшĕ-асламăш йăли-йĕркипе пурăннине мĕн çиттĕр.

– Атте-анне пире мĕн пĕчĕкрен çак ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ, – тесе сăмахлать вĕлле тавра аппаланнă май Хорнуй ял тăрăхне кĕрекен Платкасси ялĕнчи Ирина Семеновна Михайлова ашшĕ-амăш тата аслашшĕ-асламăш ĕçне паян кунта малалла аталантарма тăрăшса. Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçре вĕсен чăн-чăн династи. Апла пулсан çак ĕç яланах хĕмленсе, аталанса пытăр.

Халĕ хурт-хăмăр ăсти «Путь Ильича» агрофирмăн утарĕнче ырми-канми тăрăшать. Çак ĕç уншăн пĕрре те ют мар, çакă унăн чун-чĕри кăмăллакан ĕç пулса тăрать. Мĕншĕн тесен вăл утар ĕçĕпе мĕн пĕчĕккĕллех паллашнă. Аслисем утарта ĕçленĕ май Иринăна унта илсе кайнă.

**Сăн ӳкерчĕкре: хурт-хăмăр ăстисен хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче кану çук.**

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

Районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕн кăтартăвĕсем

## Хыçра – çичĕ уйăх

**ПРОМЫШЛЕННОСТЬ**

Кăçалхи январь–июль уйăхĕсенче районти промышленность предприятийĕсенче пĕтĕмпе 858436,4 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 139,1 процент пулать. Пĕлтĕрхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлекен предприятисем шутĕнче «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (22259 пин тенкĕ – 117 процент), акционерсен «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» усă обществи (2610 пин тенкĕ – 100,4 процент), акционерсен «Сеспель» хупă обществи (574886 пин тенкĕ – 187,8 процент), «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (15301 пин тенкĕ – 125,6 процент), «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ (14452 пин тенкĕ – 124,5 процент), «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ (39327 пин тенкĕ – 111 процент).

Акционерсен «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă обществи ĕç кăтартăвне иртнĕ çулхи шайран 5,7 процент, акционерсен «Муркашри сĕт завочĕ» уçă обществи 17,4 процент, «Моргаушкорм» чикĕллĕ яваплăхлă общество 9,4 процент, «Сундырское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ 1,1 процент, акционерсен «МСО «Моргаушская» хупă обществи 71,4 процент, Муркаш почтамчĕ 20,9 процент чакарнă.

**ТАВАР СУТАССИ**

Икĕ райпо та пĕлтĕрхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлеççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа ваккăн тавар сутассин калăпăшĕ районĕпе 435995,9 пин тенкĕпе (117,9 процент) танлашнă. Мăн Сĕнтĕрсем тĕрлĕ тавар 142628 пин тенкĕлĕх (117,2 процент), Муркашсем 252346,9 пин тенкĕлĕх (119,3 процент), суту-илĕвĕн ытти предприятийĕсем 41029 пин тенкĕлĕх (112,1 процент) реализациленĕ.

**СТРОИТЕЛЬСТВО**

Инвестицисемпе усă курасси иртнĕ çулхи шайран ӳснĕ. Кăçал пĕтĕмпе 242817,5 пин тенкĕлĕх инвестицисемпе усă курнă. 242817,5 пин тенкĕлĕх (109,3 процент) çурт-йĕр хута янă.

**ĔÇ РЫНОКĔ**

Ĕçсĕррисем пĕтĕмпе 67 çын. Вĕсен шучĕ иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 55 çын чухлĕ чакнă. Ĕçсĕрлĕх шайĕ 0,31 процент.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

## 39 комбайн тырă вырать

Район уй-хирĕсенче

Район уй-хирĕсенче вырма ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх августăн 9-мĕшĕ тĕлне тĕш тырă культурисене 3041 гектар çинче (20 процент) çулнă тата вырнă.

Кĕрхи тулă 2499 гектар (65 процент), ыраш 499 гектар (32 процент) вырса çапнă. Ильич яч. хис., «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче, В.В. Горбунов тата А.И. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче урпа вырма пуçăннă.

Пĕтĕмпе 8620 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ. Районĕпе вăтам тухăç гектар пуçне 28,3 центнерпа танлашать. Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., «Ударник», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче кашни гектар вăтамран 30 центнер е ытларах та тухăç парать.

Улăма 1547 гектар çинчен (вырса çапнин 51 проценчĕ) пухса тирпейленĕ. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, Ильич яч. хис., «Оринино», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче, В.В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче çак ĕçе аван йĕркеленĕ.

«Восток», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче çĕртме сухи тума тытăннă.

Хирте ĕнер 39 комбайн ĕçленĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçсем те пыраççĕ. Е. Андреев яч. хис., «Восток», Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис. хуçалăхсенче нумай çул ӳсекен курăксене иккĕмĕш хут çулассине йĕркеленĕ. Районĕпе нумай çул ӳсекен курăксен кайăвне 325 гектар (6 процент) çулнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене 1124 гектар (63 процент) çулса илнĕ.

Утă 7802 тонна (142 процент), сенаж 10665 тонна (162 процент), силос 16183 тонна (87 процент), витаминлă курăк çăнăхĕ 50 тонна хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ.

Кĕрхи культурăсем акма 2921 тонна (44 процент) çĕр хатĕрленĕ.

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вырма ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартни (процентпа)**

| | |
|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 32 |
| «Восток» | 47 |
| «Герой» | 22 |
| Ильич яч. хис. | 26 |
| «ВТМ» ООО | 18 |
| «Путь Ильича» АФ ООО | – |
| «Моргаушская» | 37 |
| «Оринино» | 25 |
| «Передовик» | 5 |
| «Свобода» | 30 |
| Суворов яч. хис. | 29 |
| «Ударник» | 30 |
| Чапаев яч. хис. | 12 |
| Чкалов яч. хис. | 26 |
| «ДаАн» ООО | – |
| Мичурин яч. хис. АФ ООО | 7 |
| «ВаСем» ООО | 5 |
| «Колос» АПФ ООО | 16 |
| «Гея» ООО | 9 |
| «Акрамовское» | – |
| «Бездна» ООО | – |
| С.К. Сретинский ХФХ | – |
| В.В. Бархаткин ХФХ | 33 |
| В.В. Горбунов ХФХ | 5 |
| А.И. Толстов ХФХ | 17 |
| А.А. Афанасьев ХФХ | – |
| А.Н. Пихтеров ХФХ | 21 |
| А.Н. Никитин ХФХ | – |

Раççейре

## Ĕç кĕнекисем историре юлĕç-и?

Ĕç кĕнекине пăрахăçламалла. Çапла шутлать РФ сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Александр Сафонов.

«Ĕç кĕнекин институчĕ майĕпен хăйĕн актуаллăхне çухатса пырать. Çавăнпа ăна ĕç килĕшĕвĕпе улăштарма тивĕç»,– тенĕ Сафонов «Интерфаксăн» тĕп офисĕнче ирттернĕ пресс-конференцире. Ун шучĕпе ĕç килĕшĕвĕ ĕç çыннисен интересĕсене хӳтĕлемелли чи шанчăклă инструмент пулса тăрать.

Сафонов хушса çавна каланă. Ĕç кĕнекине пĕтерни май куçăм тапхăрĕ пулма тивĕç. «Ĕçлекенĕн ĕç кĕнеки пур пулсан вăл ĕçлеме пăрахиччен те хăйĕн ирĕкĕпе унпа усă курма пултартăр. Анчах та халĕ ĕç биографине пуçлакан çамрăк çыншăн вара ĕç кĕнеки вырăнлă япала мар ĕнтĕ».

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи августăн 5-мĕшĕнчи 797 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

***çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:***

– **Галина Степановна ПАВЛОВĂНА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» акционерсен уçă обществин повар пулăшаканне;

– **Нина Егоровна КУСТОВĂНА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» акционерсен уçă обществин суту-илӳ инженерне;

– **Валериан Леонидович ШАРОНОВА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» акционерсен уçă обществин юсав мастерскойĕн слесарьне.

***Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн:***

– **Алина Алексеевна БЕЛОВĂНА**, Чăваш Республикин «Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» («Знамя победы») хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕн электронлă набор тата верстка операторне.

Шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче

## Ачасен хаваслă вăйăи-кулли – чи хакли

Шкулсенче ача сассисем янăрама пуçличчен çур уйăх ытларах юлчĕ пулсан ача сачĕсенче шăпăрлансен сасси çăвĕпех татăлмасть темелле. Юсав ĕçĕсем иртттернĕ чухне çеç садиксем шăпланса илеççĕ.

Пирĕн районти пур садикра та çак ĕçсемпе пĕрлех илем кĕртесси çине те тимлĕх ытларах уйăрма пуçларĕç. Садик тĕрлĕ конкурса хутшăнса парне е грант выляса илмесĕр малалла аталанасси йывăртараххăн пулса пынине аван ăнланаççĕ ача сачĕсен ертӳçисем. Хавхалантарăва кура воспитательсемпе кĕçĕн воспитательсем те ал ĕçĕн «тĕрлĕ сферинче» ăстаран та ăста пулса тăчĕç ĕнтĕ. Мĕн кăна шутласа кăлармаççĕ пулĕ вĕсем! Чи пĕлтерĕшли вара – вĕсем ăсталанă япаласем ачасене килĕшни. Пепкесем садик картишĕнче хавасланса выляса кулни вĕсемшĕн паха парне вырăнне.

Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕррине тĕрĕсленипе пĕрлех районти ятарлă комисси ача сачĕсене те тĕрĕслерĕ. 16 ача садĕнчен пĕринче – Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи «Радугăра» – çивитти юсас ĕçсем пыраççĕ. Кирлĕ материал туяннă. Çак эрнере строительсем ĕç вĕçлессе шанаççĕ.

Ыттисем ачасене йышăннă ĕнтĕ. Вĕсенче те палăрмлă ĕçсем пурнăçланă. Орининти «Золушкăра» акă хутса ăшăтмалли системăна çуса тасатнă. Мăн Сĕнтĕрти «Мечтара» çивитти юсаса çĕнетнĕ. Москакассинчи ача садĕнче те çивитти юсаса çĕнетеççĕ, 25 ачаран тăракан ушкăн валли пушă пӳлĕм юсаса хута яраççĕ. Йӳçкассинчи «Василек» ача садĕнче ăшă трассине юсассипе тимлеççĕ, Отаркăри «Малышра» шыв пăрăхĕсен тытăмне юсаса çĕнетеççĕ. Çак уйăхра «Путене» ача садĕнче чӳречесене, шыв пăрăхĕсемпе канализаци пăрăхĕсене çĕннисемпе ылмаштармалла. «Рябинушкăра» ача садне кĕмелли алăксене улăштарнă.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).**

Çырăнтару

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаçата сентябрь уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ. Çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

# Çынсенче ăшă туйăм çуратать

Культура

Юлашки вăхăтра Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен ялсен культура пурнăçĕнче илемлĕ те асра юлмалли событисемпе пулăмсем сахал мар пулса иртеççĕ. Вĕсенчен пĕри – Анаткас Апаш ялĕнче Раççей Федерацийĕн вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕн Николай Григорьевич Юткинăн картинисен «Родные просторы» выставки уçăлни. Живопись произведенийĕсен выставки июлĕн 30-мĕшĕнче уçăлчĕ, августăн 15-мĕшĕччен пырать. Экспозицире 40 картина ытла, 2 макет. Ĕçсен ытларах пайне кăçал пурнăçланă.



Выставкăна уçнă çĕре Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева, Чуманкасси шкулĕн директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.М. Васильев, Уйкас Янасал чиркĕвĕн настоятелĕ Иоан иерей, республикăри художество музейĕн живопись пайĕн хранителĕ, художниксен союзĕн членĕ В.В. Кузина, педагогика наукисен кандидачĕ Л.М. Бельцова, çемье тусĕсем Людмила Анатольевнăпа Вячеслав Васильевич Скляр, Ольга Сергеевнăпа Михаил Алексеевич Ивановсем тата ыттисем чылайăн хутшăнчĕç.

Л.Г. Ковалева сăмахĕ юрă саламĕнчен пуçăнчĕ. Кайран вăл ял тăрăх администрацийĕн Тав çырăвне пачĕ. Хăйĕн сăмахĕнче çак выставка тăван тавралăха юратма тата хисеплеме вĕрентнине, тăван çĕре парăнă ытти çынсемшĕн те тĕслĕх пулса тăнине палăртрĕ.

Н.Г. Юткинăн картинисен «Родные просторы» выставки Муркашри историпе краеведени музейĕнче те иртнĕ пулнă. Унта автора район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева район администрацийĕн Тав çырăвне панă. Пухăннисем умĕнче Людмила Германовна çав Тав çырăвне вуласа пачĕ. Ку выставка çитĕнекен ăрăва нравственноç воспитанийĕ парас тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă унта.

Иоан иерей çакăн пек пысăк ĕç тăван тавралăх илемне курма тата туйма вĕрентни, ăна сыхласа хăварма пулăшни пирки каларĕ. Çын çăкăрпа кăна тутă пулаймасть тесе ахальтен каламан. Çыннăн ăс-хакăл пуянлăхĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Н.Г. Юткин Иоан иерее Уйкас Янасал чиркĕвĕн макетне парнелерĕ (**сăн ӳкерчĕкре**). Ку ĕçе пурнăçлаканĕ – ачаранпа инвалид Алексей Рыбкин. Çак ĕçе вара вăл Николай Григорьевич ертсе пынипе пурнăçланă.

Чуманкасси шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен Юрий Николаев пулă тытмалли тралерăн модельне хатĕрленĕ. Паллă ĕнтĕ, Н.Г. Юткин пулăшăвĕсĕр мар.

В.В. Кузина живописец пултарулăхĕ çинче чарăнса тăнă май вăл нумай енлĕ те анлă пулнине палăртрĕ. Вăл вырăс шкулĕн традицийĕсене сыхласа хăварма тăрăшать. Çак пысăках мар выставкăн пĕлтерĕшĕ вара пĕчĕк тесе калаймăн.

В.М. Васильев асăннă выставкăна çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май шкулта йĕркелеме сĕнчĕ. Çак картинăсем ачасенче тăван çĕре юратас туйăма аталанма пулăшăр. Вĕсем кăвак тӳпепе, симĕс курăкпа, черчен чечекпе килелме-йăпанма вĕренччĕр.

Юткинсен çемье тусĕсем Людмила Анатольевна тата Вячеслав Васильевич Скляр авторăн педагог пултарулăхĕ пысăк пулнине, вăл çынсем тата вĕренекенсем тĕлĕшпе ырă туйăмлă пулнине палăртрĕç.

Л.М. Бельцова Николай Григорьевич та, унăн мăшăрĕ Светлана Александровна та хăйсен профессине чунпа парăнни пирки каларĕ. «Çакăн пек пултарулла çын сирĕн ялта пулни сирĕншĕн питĕ лайăх»,– терĕ вăл.

Депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕ пулнă Г.Н. Тимофеев, тĕнче чемпионкин Вера Соколовăн амăшĕ Н.Г. Соколова выставка уçни çак ял çыннисемшĕн кăна мар, сывăхри ытти ялсенче пурăнакансемшĕн те чăн-чăн уяв пулса тăнине палăртрĕç.

Л.Г. Ковалева тата В.С. Макарова хăйсен юррисемпе Юткинсен çемйин, пуханнисен чĕрисене хускатрĕç пулĕ.

Картинăсен авторĕ çак экспозицие хатĕрлес шухăш мĕнле çурални пирки чарăнса тăчĕ. Тăван ен кашниншĕнех епле илемлĕ те тĕрлĕ енлĕ. Ăна куçпа курма, чунпа туйма пĕлмелле.

Анаткас Апашри ялти клуб администраторĕ А.В. Семенова çавна палăртрĕ. Çак картинăсем çынра ăшă туйăм çуратаççĕ. Чун-чĕри ырăлăхпа тулман çын çакăн пек пейзажсене сăнласа пама та пултараймĕччĕ. Малашне те тухăçлĕ ĕç, ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сунчĕ вăл картинăсен авторне.

**А. СЕМЕНОВА,**
**Анаткас Апашри ялти клуб администраторĕ.**

Налук ыйтăвĕсемпе

# Улшăнусем вăя кĕчĕç

***Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса налук законодательствине улшăнусем кĕртнĕ. Вĕсем уйрăм çынсем çĕр налукне, транспорт налукне тата пурлăхшăн налук тӳлессин вăхăчĕпе çыхăннă. Ку улшăнусем пирки тĕплĕнрех Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ, Раççей Федерацийĕн патшалăх гражданла службин 3-мĕш класлă советникĕ Л.В. МИХАЙЛОВА каласа пама кăмăл турĕ.***

– Çапла, улшăнусем вăйра ĕнтĕ. Вĕсем пирки хаçат вулакансене паллаштарни ытлашши пулмĕ.

**Çĕр налукĕ.** 2011 çултан тытăнса предприниматель пулса тăман уйрăм çынсем, çавăн пекех предприниматель ĕçĕ-хĕлĕпе сыхăннă уйрăм çынсем те, енчен те вĕсен харпăрлăхра е тата ялан лăх усă курма уйăрса панă çĕр лаптăкĕ пур пулсан, çав çĕр лаптăкĕпе вĕсем предприниматель ĕçĕ-хĕлĕ валли усă курмаççĕ пулсан, çĕр налукне аванс шучĕпе тӳлесе тăмаççĕ.

Район территорийĕнче вырнаçнă муниципаллă 16 пĕрлешӳĕн халăх суйлакан органĕсен нормативлă право акчĕсене улшăнусем кĕртнĕ май уйрăм çынсем малашне çĕр налукне хысçăнхи çул ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тӳлемелле пулать. Калăпăр çĕр налукне 2010 çулшăн налук органĕнчен ярса панă пĕлтерĕве (уведомление) кура 2011 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен кая юлмасăр тӳлесе татмалла пулать.

**Транспорт налукĕ.** 2010 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикин 51 № «О внесении изменений в Закон Чувашской Республики «О вопросах налогового регулирования в Чувашской Республике, отнесенных законодательством Российской Федерации о налогах и сборах к ведению субъектов Российской Федерации» Саккунĕ пичетленсе тухрĕ. Унта уйрăм çынсем транспортшăн налук тӳлесе татмалли куна ноябрĕн 1-мĕшĕччен тесе палăртнă. Апла пулсан 2010 çулшăн транспорт налукне кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен тӳлесе татма тивет.

**Уйрăм çынсен пурлăх налукĕ.** Унччен куçман пурлăх хуçи пулса тăракан уйрăм çынсем пурлăхшăн налук çулталăк вĕçлениччен аванс шучĕпе тӳлесе тăнă. Налукне икĕ тапхăрпа тӳлемелле пулнă: сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр тата ноябрĕн 15-мĕшĕччен.

2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей Федерацийĕн 1991 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче йышăннă 2003-1 № «О налогах на имущество физических лиц» Саккунне улшăнусем кĕртнĕ. Кунта та тӳлев вăхăчĕ – ноябрĕн 1-мĕшĕччен. Апла пулсан уйрăм çынсен иртнĕ çулшăн пурлăх налукне кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен тӳлесе татмалла.

Çак улшăнусем 2011 çултан тытăнса вăя кĕчĕç. Çавна май уйрăм çынсем пурлăхшăн 2011 çулшăн тӳлемелли пирки пĕлтернисене 2012 çулта кăна илĕç.

2011 çулта налук тӳлемелли пирки пĕлтернисене 2008–2010 çулшăн тӳлеменнисем илĕç.

Çавна асăрхаттаратпăр. 2010 çулшăн транспорт налукĕпе çĕр налукне тӳлемелли пирки пĕлтернисене вара çынсене 2011 çулхи август–-сентябрь уйăхĕсенче ярса парĕç.

Налуксене кредит учрежденийĕсенче, почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсенче, çавăн пекех Раççей Перекет банкĕн банкомачĕсемпе тӳлев терминалĕсем урлă та тӳлеме май пур.

**Налук тӳлемеллин пĕрлĕхлĕ пĕлтерĕвĕ (уведомленийĕ).** 2011 çулта уйрăм çынсем налуксене налук тӳлемеллин пĕрлĕхлĕ пĕлтерĕвне тĕпе хурса тӳлĕççĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Финанс министерствипе килĕшсе туса хатĕрленĕ, РФ Юстици министерствинче регистрациленĕ.

Çĕнĕ уведомлени унчченхинчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха:

– çĕнĕ налук уведомленине налук хумалли ку е вăл объект уйрăм çыннăн пуррипе çуккине кура çӳлте асăннă виçĕ тĕрлĕ налука та кĕртеççĕ;

– кашни налук енĕпе расчет тата çĕнĕрен расчет тунине уйрăммăшар сыпăксенче палăртаççĕ: 1-мĕш сыпăк. Транспорт налукĕн расчечĕ (çĕнĕрен расчет туни); 2-мĕш сыпăк. Çĕр налукĕн расчечĕ (çĕнĕрен расчет туни); 3-мĕш сыпăк. Уйрăм çынсен пурлăх налукĕн расчечĕ (çĕнĕрен расчет туни). Енчен те уйрăм çыннăн асăннă енсемпе налук тӳлемелле мар пулсан тата налук тӳлессинчен хăтарнă пулсан ăна кун пек уведомлени ярса памĕç;

– уведомлени çинче налук органĕ пичечĕ тата должноçри çын алă пусни пулмасть.

2011 çулта пур налук уведомленийĕсене те «Налог-ЦОД» АИС программипе усă курса централизациленĕ майпа Раççей Федераллă налук инспекцийĕн Чул хула облаçĕнчи ЦОД урлă ярса параççĕ. Налук тӳлекен патне ăна регистрациленĕ адреспа заказлă çырусем пырĕç. Конверт çинче вара Чул хулан «Раççей почтин» штампĕ пулĕ.

Енчен те пурлăх е транспорт хуçи пулса тăракан гражданин ку е вăл сăлтавпа налук уведомленийĕ илмен пулсан унăн Федераллă Чăваш налук инспекцийĕн Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцине пырас пулать. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 4-мĕш çурт. 8(83541) 62-4-52 телефонпа та шăнкăравлама пултаратăр.

2011 çул – Раççей космонавтикин çулталăкĕ

# Район историйĕпе çыхăннă

Муркаш сăн-сăпачĕ лайăх еннелле улшăнса пыни куçкĕрет. Малтанхи ырă йăла-йĕркесемпе пĕрлех çĕннисем те хушăнсах пыраççĕ. Çав шутра пысăкламлă сăн ӳкерчĕклĕ каçхине те çуталса тăракан панносем те. Кун пек панносем ФСК кермене çинче те, Çĕнтерӳ паркĕ патĕнче тата ытти çĕрте те пур.

Автовокзал лапамĕнчи панно çинче чи малтанах пирĕн ентешсен Социализмла Ĕç Геройĕн О.Ф. Федоровăн тата Раççей Геройĕн Е.Г. Борисовăн сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарнăччĕ. Кăçал вара Раççей космонавтикин çулталăкне халалласа А.Г. Николаев космонавт летчикăн тата Муркашсен паллă колхоз председателĕн Е.А. Андреевăн портречĕсене вырăн панă. Ку ăнсăртран маррине район çыннисенчен нумайăшĕ пĕлет тесе шанас килет. Пĕлменнисем те ăнланаççĕ: çĕр çинчи çитĕнӳсемсĕр (вăл шутра хресчен ĕçĕнчи çитĕнӳсемсĕр те) çĕр-шывăн 50 çул каялла пулса иртнĕ космоса тухассин тĕллевлĕ çитĕнĕвĕ пулма пултарĕччĕ-и вара?

Ахальтен мар виççĕмĕш космонавт пĕрремĕш хут космоса вĕçнĕ хыççăн (1962 çулхи августăн 11–15-мĕшĕсем) вăхăт нумаях та иртмен, Андриян Григорьевич Муркашсем патĕнче хăнара пулнă, республика шайĕнче çирĕп хуçалăх шутланакан «Знамя труда» колхозăн çитĕнĕвĕсемпе, унăн ĕçченĕсемпе, çав шутра Е.А. Андреевпа паллашнă, район халăхĕпе тĕл пулусем ирттернĕ. (Аса илтерсе хăварар: ку вăл 1963 çулхи февраль уйăхĕн вĕçĕнче пулнă. Ун чухне Муркаш район центрĕ пулман. Муркаш районне 1964 çулхи март уйăхĕнче тепĕр хут туса хунине пĕлетпĕр ĕнтĕ).

Çакăнтан пуçланнă та икĕ паттăр ентешĕн туслăхĕ. Кĕçех унччен РСФСР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă Евтихий Андреевич Андреевăн депутат мандачĕ эстафетăпа Андриян Григорьевич Николаев космонавт летчика куçнă. Ун чухне альтернативлă суйлавсем пулман, Е.А. Андреев сĕнĕвĕпе унăн суйлавçисем черетлĕ суйлав вăхăтĕнче хăйсен сассисене хавасспах паттăр ентеш-космонавтшăн панă, Евтихий Андреевича хăйне вара суйлавçăсем иккĕмĕш хут ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулма шаннă (1963 çулхи мартăн 3-мĕшĕ).

Кунта, тен, парти обкомĕн витĕмĕ те пулнă пулĕ. Сăмах май, çав вăхăтра парти обкомĕн секретарĕнче ĕçленĕ И.П. Прокопьев маларах, 1955 çулта, РСФСР Аслă Канашĕн депутачĕ пулма кандидата тăратнă Е.А. Андреевăн шаннă çынни (довереннăйĕ) пулнă. Ун чухне И.П. Прокопьев Калинин (Нурăс) парти райкомĕн ертӳçи пулса ĕçленĕ.

Аса илӳсенчен А.Г. Николаев Е.А. Андреева Шуршăл колхозне ертсе пыма чĕнни те паллă. Сĕнĕве йышăнманнин чи пĕлтерĕшлĕ сăлтавĕ Евтихий Андреевич, çав вăхăталла Муркашсен пĕрлештернĕ хуçалăхне 15 çула яхăн ертсе пыраканскер, хăй тăрăшнипе ура çине тăратнă колхоза, унăн ĕçченĕсене чунтан парăнса ĕçленине теме пулать. Тепĕр енчен унччен пурнăçри нумай йышăнăва унăн парти дисциплинине тĕпе хурса йышăнма тивнĕ пулсан, ку хутĕнче пĕтĕмпех хăйĕн кăмăлĕнчен килнĕ. Çапах та Муркашсен председателĕ Шуршăлла пĕрре кăна мар çитсе курни, унти колхоз фермисене аталанă ĕнесем туянтарни тата ытти пулăшу пани, унти председательпе те, В.В. Зайцевпа, вĕсем пысăк туссем пулни паллă.

Аслă вăрçă витĕр тухнă опытлă политработник тата организатор Е.А. Андреев космоса виççĕмĕш вĕçсе хăпарнă чăваш ывăлĕ Андриян Григорьевич Николаев республикăшăн кăна мар, пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн мĕнле паллă вырăн йышăннине питĕ лайăх ăнланнă. Ăна чунтан хисепленĕ, унран чылай аслăрах пулнă май (вăл Андриянран 17 çул аслăрах пулнă) шăллĕ вырăннех хурса йышăннă.

(Вĕçĕ çитес номерте).

# Ачасен хавaслӑ вӑййи-кулли – чи хакли

*Отарккӑри «Малыш» ача садĕнче пĕлтĕр çивитти улӑштарма май килнĕшĕн паян садик ĕçченĕсемпе ачасем кӑна мар, ашшĕ-амӑшĕ те питĕ кӑмӑллӑ. «Çак пысӑк ĕç пурнӑçлантӑр тесе район администрацийĕ садик коллективне тата пире, ашшĕ-амӑшне, ӑнланса хирĕç утӑм тунишĕн, пулӑшнӑшӑн тав тӑватпӑр», – теççĕ кунта çӳрекен ачасен ашшĕ-амӑшĕсем.*

*Кӑçал вара пӳлĕмсенче юсав ĕçĕсем пурнӑçланипе пĕрлех воспитательсемпе кĕçĕн воспитательсем картишĕнчи тирпей-илемшĕн ырми-канми тӑрӑшрĕç. Ытти садиксенче пластикран хатĕрленĕ япаласем чылай пулсан кунта вара ачасене ытларах йывӑçран тата машина кустӑрмисенчен хатĕрленисем савӑнтараççĕ.*

## Шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче



*«Салам! Эпир пӑравуспа çитрĕмĕр!».*



*Ирина Александровна Воробьева çамрӑк специалист: «Пыл чĕресĕ тыттарнӑ упапа хавaслӑ мулкач ачасене килĕшессе шантӑм».*



*«Кун пек зебра урӑх никамӑн та çук!».*

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Районти çулталӑк çурӑран пуçласа 7 çулччченхи 1530 ача (60,9 процент) ача сачĕсене тата шкулсем çумĕнче йĕркеленĕ шкулччченхи ушкӑнсене çӳрет.

Пур ачана та хальлĕхе, шел пулин те, ача садĕнчи вырӑнпа тивĕçтерме май çук. Тӑват çĕре яхӑн ача «черетре тӑрать». Муркашра, Мӑн Сĕнтĕрте тата Москакассинче ку ыйту уйрӑмах çивĕч. «Çакна шута илсе ĕнтĕ кӑçалхи пĕрремĕш çур çулта ача сачĕсенчи ушкӑнсене нумайрах ача вырнаçтарса пĕтĕмпе 78 ача валли вырӑн туса патӑмӑр», – пĕлтерчĕ район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрӑксен политикин тата физкультурӑпа спорт пайĕн пуçлӑхĕ З.Ю. Дипломатова. Ушкӑнсенче ача шучĕ хушӑнни санитарипе гигиена требованийĕсене хирĕçлеменнине каларĕ вӑл: «Кӑçалхи январĕнчен вӑя кĕнĕ çĕнĕ требованисемпе килĕшӳллĕн ушкӑнри пĕр ачана 2,5 тӑваткал метр лаптӑк тивĕçмелле».

Иккĕмĕш çур çулта акӑ «Колокольчикра» хушма ушкӑн йĕркелеççĕ.

Палӑртнӑ тӑрӑх 2012 çулта Муркашри лицей вырнаçнӑ çурта ача сачĕ валли реконструкцилеме тытӑнмалла. Унта 60 ача çӳреме пуçлĕ. Çапла вара çитес вӑхӑтра черет кӑшт кĕскелесси курӑнать.

Сосновкӑри тата Шатракассинчи тĕп шкулсем çумĕнче шкулччченхи ачасен кĕске вӑхӑт хушши пулмалли ушкӑнсем ĕçлеççĕ. Ашшĕ-амӑшĕн вара ушкӑнсене тулли кунпах ĕçлеттерес кӑмӑлĕ пысӑк. Анчах та ку ыйту хальлĕхе уçӑ юлать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сӑн ӳкерчĕкĕсем.**


**12 августа с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Белорусской фабрик и других российских производителей.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

кредитный потребительский
**КАПИТАЛ**
кооператив граждан
**работает на вас**
**6-23-10**
всегда доступные займы
ипотечные займы с использованием материнского капитала
принимаем сбережения под серьёзные проценты
ул. Чапаева, 44 а / 2 8 927 667-48-92
kpkgkapital.ru
работаем с пайщиками


## Прогноз погоды

| | среда 10 августа | | | | четверг 11 августа | | | | пятница 12 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +19 | +26 | +33 | +23 | +19 | +27 | +33 | +24 | +20 | +28 | +33 | +25 |
| Давление мм | 746 | 747 | 746 | 746 | 747 | 746 | 745 | 744 | 745 | 744 | 743 | 743 |
| Влажность % | 67 | 45 | 23 | 49 | 63 | 44 | 26 | 54 | 70 | 49 | 28 | 53 |
| Ветер м/с | Ю-З 6 | Ю-З 5 | Ю-З 5 | Ю 5 | Ю 4 | Ю 6 | Ю 5 | Ю 5 | Ю 4 | Ю-В 5 | Ю 4 | Ю-В 4 |
| Солнце восход/заход | | 05:13 | 20:42 | | | 05:15 | 20:40 | | | 05:17 | 20:38 | |
| Луна восход/заход | | 18:44 | 01:08 | | | 19:14 | 02:20 | | | 19:36 | 03:37 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления


Продаю деревянный дом в хорошем состоянии, самовывоз. Тел.: 8-903-359-99-77.

* * *

Продается ВАЗ 2109-3 2001 года выпуска, инжектор, тонировка, сигнализация. В хорошем состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-927-860-31-37.

* * *

Продается однокомнатная квартира в с. Моргауши по ул. Заводская, д. 11, кв. 1. Цена договорная.
Тел.: 8-960-306-11-18.

* * *

Бригада опытных каменщиков, плотников, отделочников предлагает свои услуги: строительство домов, хозпостроек, заборов, крыш и т. д.
Тел.: 8-927-866-66-63, 8-927-864-09-37.

* * *

Продается двухкомнатная квартира по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 19, кв. 5. Цена договорная.
Тел.: 8-919-673-90-87, 8-919-673-90-89.

* * *

В салон мебели требуется сборщик мебели. Оплата своевременная, можно по совместительству. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2. Тел.: 8-917-679-87-61. 1-2.

* * *

ООО «Молочный завод «Моргаушский», расположенное по адресу: с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 65, объявляет прием на работу водителей на автомобили марки «Газель» по перевозке молочной продукции по территории Чувашской Республики и за ее пределами. Оплата достойная. Информацию по интересующим вопросам можно получить по тел: 62-6-41, 63-4-07 или в отделе кадров.

* * *



**ТОЛЬКО 12, 19 августа в Моргаушах и 14, 21 августа в Б. Сундыре**
**ВЫСТАВКА-ПРОДАЖА УМНЫХ ЧУДО-ИНСТРУМЕНТОВ**

Скоро у моргаушцев слово «огород» перестанет ассоциироваться с тяжелым трудом по перекопке и окучиванию почвы, с болью в спине и ноющих руках и ногах.

Моргаушцы могут посетить уникальную выставку- продажу и купить чудо-инструменты.



Чудо-картофелекопалка – простой и удобный в работе инструмент для копки картошки и других корнеплодов.

Работаем не сгибая и не нагружая спину.

Культиватор-корнеудалитель «Торнадо», Чудо-лопата «Пахарь», Чудо-вилы поворотные – слабая и хрупкая женщина с их помощью вскопает 3 раза больше земли, чем здоровый и сильный мужчина за тоже время с помощью простой лопаты!

Чудо-окучник превратит в легкую разминку обработку 10 соток за один час. Кроме окучивания поможет посадить картошку, нарезать борозды.



Чудо-секатор «Комфорт» поможет идеально подстричь кустарники, благодаря храповому механизму легко срезать ветки яблонь толщиной до 2,5 см.

РАБОТАЙ В УДОВОЛЬСТВИЕ БЕЗ НАГРУЗКИ НА ПОЯСНИЦУ!

МЕНЬШЕ УСИЛИЙ – БОЛЬШЕ УРОЖАЙ!
Пенсионерам СКИДКИ от 5 до 30% !
Позвони по тел. 8(8352)37-86-37.

ВЕСЬ ИЮЛЬ-АВГУСТ:
закажи банкет (свадьбы, юбилеи, корпоративы) - получи скидку5%!
Максимум качества и минимум затрат.
Бизнес-ланч с 12.00 до 15.00 ч. за 98 рублей
Кафе "Ярославна"
Мы открылись!



МОРГАУШСКОЕ РАЙПО, ИНН 2112000027
Чувашская Республика, Моргаушский район, д.Ярославка, ул.Центральная, д.4, тел. 67-7-76, 89278686109

для пайщиков
СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ
ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ
- на любые неотложные нужды
- на покупку и строительство жилья под материнский капитал

ВНИМАНИЕ! ЛЬГОТНЫЙ ЗАЙМ “СКОРО В ШКОЛУ”
ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ
- пенсионерам льготные % ставки

ДО 31.08.2011 г. ДЕЙСТВУЕТ АКЦИЯ С ПОВЫШЕННЫМИ % СТАВКАМИ
Кредитный потребительский кооператив “Содружество” отделение №3, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23
тел. 62-8-86, 8-919-673-42-19
www.kpksodrugestvo.ru

Магазин-салон
ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ
п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13
тел. 8-987-668-04-83
реклама
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ, КОЛОНКИ GAZLUX,WOLF,
ПЛИТЫ (газ-контроль)
Разработано совместно ОАО "ГАЗПРОМ-РЕГИОНГАЗ" и ОАО НИИ "ГИПРОНИИГАЗ" специально для Российских условий эксплуатации
ГАЗОВЫЕ КОТЛЫ: SIBERIA, ОЧАГ
Выполняем: проекты газификации, квалифицированный монтаж
Доставка и установка плиты - БЕСПЛАТНО, рассрочка оплаты
г. Чебоксары, Сев. ярмарка,тп №10
тел. 8-951-998-90-77

СИСТЕМА АВТОМАТИЧЕСКОГО ПОЛИВА
ландшафтные работы
укладка газона
обслуживание
т.36-27-79, 8-967- 470-27-79

**Йывӑç пӳрт сутатпӑр, лаптӑкĕ 13,8 тӑваткал метр, хуралтӑсем пур, çĕр лаптӑкĕ 18 сотка. Адресĕ: Кашмаш ялĕ. Тел.: 8-927-99-77-971.**


Сосновкӑри тĕп шкул коллективĕ кунта директорта, çавӑн пекех биологипе хими учителĕнче ĕçлекен И.П. Федотовӑн ашшĕ

**Петр Ильич**
**РАЗБОЙКИН**

вилсе кайнӑ пирки унӑн тӑванĕсемпе тата çывӑх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн, тарӑннӑн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чӑваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапллӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхӑну, информаци технологийĕсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавӑн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калӑпӑшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырӑвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавӑрса памаççĕ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаççĕ.
Рекламӑпа пĕлтерӳсен чӑнлӑхĕшĕн вĕсене паракансем явапллӑ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чӑвашла юн тата шӑмат кунсерен тухать.
Номер дежурнӑйĕ Макарова Р.А.
Пичете панӑ 09.08.2011 ç.
Пичете памалли вӑхӑт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чӑннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4343.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.